1-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАРТ 14 ЮНКУН 49(6800) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Вӑрçӑпа хуçалӑх тӗлӗшӗнчи паха задача

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн постановленийӗ тӑрӑх, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Чӑваш АССР-ӗнче ялхуçалӑхне аталантармалли 1945 çулти плана çирӗплетрӗç. Республика Совнаркомӗпе парти Обкомӗ çакна палӑртрӗç: пирӗн республикӑри нумай колхозсемпе МТС-сем тата районсем, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, 1944 çулти çуракине кӗске сроксенче тата лайӑх пахалӑхлӑн туса ирттерчӗç, тырпулсене вӑхӑтра та кал-каллӑн пухса кӗртрӗç, тырпул тухӑçлӑхне тата тӗштырӑпа ытти ялхуçалӑх культурисен пӗтӗм хисепне ӳстерчӗç. Çакӑ вара государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра парса татма, колхозниксене ӗçкунӗсем тӑрӑх тӗштырӑпа çӗрулми тата ытти çимӗçсем чылай валеçсе пама май пачӗ. Анчах хӑшпӗр районсем 1944 çулта ялхуçалӑх ӗçӗсен планне пурнӑçа кӗртеймерӗç, çавӑн пекех уйхир ӗçӗсене кирлӗ пек пахалӑхлӑн туса ирттереймерӗç, тырпул тухӑçлӑхне ӳстермелли тата государствӑна ялхуçалӑх продукчӗсем памалли задание тултараймарӗç. Пӑрачкав, Кувакино, Улатӑр, Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Комсомольски, Йӗпреç, Хӗрлӗ Чутай тата Первомайски районсен руководителӗсем иртнӗ çулта начар ӗçлениччен хӑйсем валли тивӗçлӗ выводсем тумарӗç. Вӗсем халӗ кӑçалхи ялхуçалӑх ӗçӗсене пачах та çителӗксӗр хатӗрленеççӗ.

Кашни район валли 1945 çулта çурхи тырӑсем акмалли плана, кӗрхи тырӑсем пухса илмелли çӗр лаптӑкне, 1946 çул валли кӗрхи тырӑсем акмалли плана, агротехника мероприятийӗсен планне, МТС-сенчи тракторсемпе тумалли ӗçсен планне, ялхуçалӑх культурисен тухӑçлӑхне ӳстермелли, пахча-çимӗçсен тата выльӑх апачӗ валли акакан тымар-çимӗçсен вӑрлӑхӗсене акса тумалли, çырла-çимӗç йывӑççисем лартмалли заданисене, нумай çул тата пӗр çул ӳсекен курӑксене вӑрлӑхлӑх уйӑрса хӑвармалли плана, çаран утти çулмалли тата силос хывмалли плана çирӗплетнӗ. Çавӑн пекех тата парниксем тумалли плана та çирӗплетнӗ, улӑхсемпе çарансене лайӑхлатмалли ӗçсене палӑртса хунӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗпе парти Обкомӗн бюровӗ 1945 çулта МТС тракторӗсемпе сухаланӑ çӗрӗн кашни гектарӗн хӑйне ларакан хакне, çӗмçе суха çине куçарса шутласан, 35 тенкӗ те 11 пус чухлӗ çирӗплетнӗ, вӑл шутран тракторсемпе комбайнсене тата ытти ялхуçалӑх машинисене капитальнӑй тата текущи ремонт тунӑ çӗре тухакан расходсене 6 тенкӗ те 43 пус чухлӗ çирӗплетнӗ.

Райисполкомсемпе парти райкомӗсен ялхуçалӑх ӗçӗсен планне халех колхозсемпе колхозниксем тата пӗччен хуçалӑхсем патне çитермелле.

Плансене колхозсем патне çитернӗ чухне ялхуçалӑх культурисене йышӑнас пусуçаврӑнӑшӗсем тӑрӑх тата çав пусуçаврӑнӑшӗсем çине куçмалли план тӑрӑх, çавӑн пекех тата ӗç вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ мӗн чухлӗ пуррине шута илсе, вырнаçтарса тухмалла, çакӑнпа пӗрлех уйрӑм колхозсене техникӑллӑ тата пропашной культурӑсем ытлашши парса тултармалла мар.

Вырӑнти партипе совет тата çӗрӗç органӗсен, çавӑн пекех комсомолӑн ялсенчи мӗнпур организацийӗсен 1945 çул валли панӑ задание кашни районпа колхоз тӑрӑх тултарассишӗн тата ирттерсе тултарассишӗн ӗçлемелле. Совнаркомпа парти Обкомӗ çирӗплетнӗ ялхуçалӑх ӗçӗсен планӗ—закон пулса тӑрать, çав закона пурнӑçа кӗртессишӗн, мӗнпур йывӑрлӑхсене çӗнтерсе, большевикла кӗрешес пулать.

Райисполкомсемпе парти райкомӗсем хӑйсен практикӑллӑ ӗçӗн тӗп никӗсне ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Государствӑн ялхуçалӑхне аталантармалли 1945 çулхи планӗ çинчен» йышӑннӑ постановленине хума тивӗçлӗ. Партипе правительствӑн çав постановленине колхозниксен, МТС-семпе совхозсенчи работниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗсенче, уйхир бригадисемпе трактор бригадисен производствӑллӑ канашлӑвӗсенче сӳтсе явмалла. Колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсен работникӗсене, ялхуçалӑх специалисчӗсене 1945 çулхи чи паха задачӑна — тырпулсен тухӑçлӑхне пур майсемпе те ӳстерес, пухса илекен тӗштырӑсен тата ытти ялхуçалӑх продукчӗсен пӗтӗм хисепне ӳстерес задачӑна пурнӑçа кӗртме çӗре мобилизацилемелле.

Çураки çывхарса килет. Ӑна вырӑнти партипе совет тата çӗрӗç органӗсем пур ӗçпе те тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илме тивӗçлӗ. Парти райкомӗсемпе райисполкомсем хальхи вӑхӑтра кашни МТС-па совхозра тракторсемпе вӗсен инвентарьне вӑхӑтра та пахалӑхлӑн юсаса хатӗрлесси çине, çавӑн пекех тата колхозсенче лашапа ӗçлемелли инвентарьпе транспорт хатӗрӗсене тӗплӗн юсаса ӗлкӗртесси çине уйрӑмах тимлӗн çавӑрӑнса пӑхни кирлӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ республикӑри Çӗрӗç Халӑх Комиссариатне, парти райкомӗсемпе райисполкомсене апрелӗн 1-мӗшӗпе 10-мӗшӗ хушшинче кашни МТС çурхи уйхир ӗçӗсене тума мӗнле хатӗрленсе çитнине государство енчен тӗрӗслесе тухма хушрӗ. Тӗрӗслӳ комиссин составӗнче парти райкомӗн секретарӗ, райисполком председателӗ, райçӗрӗç пайӗн заведующийӗпе МТС директорӗ пулмалла. Çавӑн пекех апрелӗн 5-мӗшӗччен колхозсем çуракине мӗнле хатӗрленсе çитнине те тӗрӗслесе тухас пулать. Çак ӗçе ӑмӑртакан колхозсен председателӗсене явӑçтармалла.

Иртнӗ çул республикӑри чылай колхозсем çураки планне культурӑсем тӑрӑх пурнӑçлаймарӗç. Кӑçал çавӑн пек хӑварма ниепле те юрамасть. Апрелӗн 1-мӗшӗччен кая юлмасӑр мӗнпур колхозсен хӑйсем валли пур культурӑсем тӑрӑх та паха вӑрлӑхсем пӗтӗмӗшпех хатӗрлесе хумалла. Çавӑнпа та акма юрӑхсӑр тата ахаль йышши вӑрлӑхсене Госсортфондпа Заготзерно урлӑ сортлӑ вӑрлӑхсемпе улӑштарса илессине, колхозсем хушшинче вӑрлӑх улӑштарассине организацилемелле. Вӑрлӑх çук колхозсене ытти колхозсен кивçен вӑрлӑх парса пулӑшмалла. Иртнӗ çулхи опыт тӑрӑх, колхозниксенчен вӑрлӑх кивçен илессине те йӗркелемелле.

Ялхуçалӑхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен йышӑннӑ постановленире республика Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ райисполкомсемпе парти райкомӗсене апрелӗн 1-мӗшӗччен колхозсенче производствӑпа финанс планӗсене, çавӑн пекех бригадӑсен ӗç планӗсене туса çирӗплетессине пурнӑçа кӗртме хушса хӑварчӗç. Çав вӑхӑт тӗлнех агрономсен, колхоз правленийӗсемпе тата опытлӑ колхозниксемпе пӗрле, 1945 çулхи çуракине ирттерес тата тырпулсене пӑхса çитӗнтерес ӗçри агротехникӑллӑ мероприятисене палӑртса хумалла. Агротехника мероприятийӗсене пурнӑçа кӗртнӗ чухне акара сеялкӑсемпе туллин усӑ курасси çине, тӑпрана лайӑх ӗçлесе çемçетесси тата вӑрлӑха лайӑх витӗнтерсе хӑварасси çине, кӗрхи тырӑ калчисене апатлантарассипе сӳрелесси çине уйрӑмах тимлӗн çаврӑнса пӑхас пулать.

Колхозсенче вӑрлӑх акса тӑвас ӗçе лайӑхлатас шутпа, кашни колхозрах кашни культура тӑрӑх вӑрлӑх участокӗсем вӑхӑтра уйӑрса, вӗсен чиккисене палӑртса хумалла. Вӑрлӑх участокӗсене удобрени тӑкса çемçетнӗ тата кӗрхи çертме тунӑ чи лайӑх вырӑнсенче уйӑрмалла. Çав участоксене тухӑçлӑ пулакан сортлӑ вӑрлӑхсемпе, вӑхӑтра та пахалӑхлӑн акса хӑвармалла, тырӑ калчисене тимлӗн пӑхса çитӗнтермелле.

Райисполкомсемпе парти райкомӗсен чӗрӗ туртӑм вӑйне уйхир ӗçӗсем валли хатӗрлесе çитерессишӗн уйрӑмах тимлӗн тӑрӑшас пулать. Вайсӑр е чирлӗ лашасене халех кантарма, лайӑх апатлантарма тата сыватма тӑратмалла. Республика Совнаркомӗпе Парти Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ тӑрӑх, мартӑн 20-мӗшӗнчен пуçласа колхозсене лашапа ӗçлемелли повинноçран хӑтармалла, мартӑн 25-мӗшӗнчен кая юлмасӑр мӗнпур лашасене кантарма тата лайӑх апатлантарма тӑратмалла. Çуракинче чылай колхозсене фермӑсен тата колхозниксен ӗнисемпе вӑкӑрӗсене ӗçе явӑçтармасӑр йывӑр килет. Çавӑнпа та кашни колхозрах ӗнесемпе вӑкӑрсене ӗçе вӗрентмелли задание пурнӑçламалла.

Парти райкомӗсемпе райисполкомсен кая юлнӑ колхозсене организаципе хуçалӑх тӗлӗшӗнчен çирӗплетмелли мероприятисене халех палӑртса хурас пулать. Çав колхозсене çуракипе ытти уйхир ӗçсене агротехникӑн чи лайӑх срокӗсенче туса ирттерме кирлӗ пулӑшу парас пулать. Кая юлакан колхозсем те кӑçал вӑйлӑ тырпул туса илме тата хӑйсем кая юлнине пӗтерме пултарччӑр.

Ялхуçалӑхне аталантармалли 1945 çулхи плана пурнӑçа кӗртесси—советпа парти организацийӗсен, çӗрӗç органӗсен, колхозсен, МТС-семпе совхозсен, коммунистсемпе комсомолецсен, агрономсен, колхозниксемпе колхозницӑсен, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе служащисен Хӗрлӗ Çарпа халӑха — апат-çимӗç, промышленноçа вара—чӗртавар парса тӑрас ӗçри чи паха задачи пулса тӑрать. Вӑрçӑпа хуçалӑх тӗлӗшӗнчи çав паха задачӑна кӑтартуллӑн пурнӑçлассишӗн, çуракине ӑнӑçлӑн ирттерессишӗн, вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарар!

И. В. СТАЛИН ЮЛТАШӐН ПРИКАЗНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КӐЛАРНИ

Чӑвашсен Государство Издательстви, Верховный Главнокомандующий И. В. Сталин юлташӑн 1945 çулхи февралӗн 23-мӗшӗнчи приказне вырӑсла тата чӑвашла уйрӑм кӗнекесем туса, пичетлесе кӑларчӗ. Кашни кӗнекин тиражӗ—10.000 экземпляр.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ предприятисен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи февраль уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, пирӗн республикӑри Котов тата Слуцкий юлташсем главнӑй инженер пулса ӗçлекен заводсене виççӗмӗш преми пама йышӑннӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, малалла наступлени туса пырса, нимӗçсен ДАНЦИГ хулипе ГДЫНЯ хули сывӑхӗнчи обороннӑн тӗреклетнӗ паха пункчӗсене—ТЧЕВ (ДИРШАУ) хулипе ВЕЙХАРОВО (НОЙШТАДТ) хулине туртса илнӗ те, ГДЫНЯ хулинчен çурçӗртерехре Данциг бухти хӗррине тухса, ПУЦК (ПУТЦИГ) хулине йышӑннӑ. Çакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт çарӗсем халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—КВАШИН, КОЛЛЕТЦКАУ, РЕШКЕ, ГНЕВАУ, ГРОСС ШЛАТАУ, ЗЕЛЛИСТРАУ, ПОЛЬЦИН, ВЕРБЛИН, ШЛАВОШИН, КАРВЕН ятлӑ пысӑк ялсем. Мартӑн 11-мӗшӗнче ку районра 2.000 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем, вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн, мартӑн 12-мӗшӗнче КИСТЖИНЬ (КЮСТРИН) хулипе крепоçне — çулйӗрсен паха узелне тата нимӗçсен Одер шывӗ çинчи оборонин питӗ вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне, БЕРЛИН патне пымалли вырӑнсене хӳтӗлесе тӑраканскерне—штурмласа туртса илнӗ.

Венгрире, БАЛАТОН кӳллинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата хӗвелтухӑçнерехре, пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сире-сире янӑ, гитлеровецсене пысӑк çухату кӳнӗ. Мартӑн 11-мӗшӗнче пулса иртнӗ çапӑçусенче ку районра пирӗн артиллери нимӗçсен 54 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине пӗтерсе тӑкнӑ, унсӑр пуçне, пирӗн боецсем лартнӑ минӑсем çине пырса кӗрсе, тӑшманӑн 27 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппи сирпӗнсе кайнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ тата разведчиксем шыраса çӳренӗ.

Мартӑн 11-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 168 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине персе çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 102 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ДАНЦИГ, ГДЫНЯ ТАТА КЕНИГСБЕРГ ХУЛИСЕНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартӑн 12-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем Данциг, Гдыня тата Кенигсберг хулисенчи вӑрçӑпа промышленность объекчӗсене пырса çапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, малта асӑннӑ хуласенче пушарсем тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ. Уйрӑмах вӑйлӑ взрывсем Гдыня хулинчи çар склачӗсен территорийӗнче тата портра пулнӑ.

☆ ☆

Белоруссири 2-мӗш фронт çарӗсем ӑнӑçлӑн наступлени туса пынӑ. Данциг хулине кӑнтӑр енчен пырса кӗмелли вырӑнсенче совет чаçӗсем чугун çулсен пысӑк узелӗ тата нимӗçсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Тчев (Диршау) хулине туртса илнӗ. Тӑшман ку районра хӑйӗн пехотин пысӑк вӑйӗсене пухнӑ та контратакӑсем тунӑ. Пирӗн малти подразделенисем тӑшман контратакисене сире-сире янӑ. Çав вӑхӑтра пирӗн тӗп вӑйсем тӑшмантан аякран иртсе кайнӑ та нимӗçсене флангран сасартӑк пырса çапнӑ. Тӑшман группировкине хӑйне хупӑрласа илесси хӑратма пуçланӑ. Вара нимӗçсем ним йӗркипаллисӗр, хӑйсен хӗçпӑшалӗпе боеприпасӗсене пӑраха-пӑраха каялла чакнӑ. Пӗр участокра пирӗн çӑмӑллӑн куçса çӳрекен соединенисемпе пехота нимӗçсен çӗмӗрсе тӑкнӑ чаçӗсене хӗваласа пырса питӗ хӑвӑрт малалла кунӑ та Вейхарово (Нойштадт) хулин хӗвеланӑç хӗррине пырса çитнӗ. Нимӗçсем, баррикадӑсемпе тата чул çуртсемпе усӑ курса, хытӑ хирӗç тӑнӑ. Пирӗн пехотинецсемпе танкистсем тӑшманӑн хирӗç тӑмалли узелӗсене пусарса лартнӑ та Вейхарово хулине туртса илнӗ. Çитӗнӗве вӑйлатса пырса, фронт çарӗсем 25 километр малалла кайнӑ, çав тери хӑвӑрт атакӑласа Данциг бухти хӗрринче ларакан Пуцк (Путциг) хулине туртса илнӗ. Кун каçиччен наступлени туса пырса, халӑх пурӑнакан тата ытти 100 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—шоссе çулӗсен узелӗ пулса тӑракан Квашин ялӗ. Ку ял Гдыня хулинчен 10 километрта ларать. Нимӗçсен аллинче Данциг бухти хӗррипе выртакан ансӑр çӗр тӑрӑхӗ кӑна юлнӑ. Пирӗн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тӑшман питӗ пысӑк çухату тӳсет. Халӑх пурӑнакан пунктсен урамӗсенче тата çулсем тӑрӑх тӑшманӑн темиçе пин вилли выртать. Пирӗн чаçсем 34 танкпа хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑ, 11 бронетранспортер, 217 хир туппи, 6 самолет, 1.800 лав, 2.600 лаша, 15 чугун çул эшелонӗ тата ытти трофейсем те нумай тытса илнӗ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронт çарӗсем паян Кистжинь (Кюстрин) хулипе крепоçне штурмласа туртса илнӗ. Ку хула Варта шывӗ Одер шывне юхса кӗнӗ вырӑнта ларать, вӑл нимӗçсен Берлин хули патнелле пымалли çулсене хӳтӗлекен питӗ вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ пулнӑ. Юлашки çулсенче крепость форчӗсене тимӗрпе бетонран тунӑ сооруженисемпе вӑйлатнӑ. Темиçе кун каярах пирӗн çарсем Кистжинь хулипе крепоçне тытса илесшӗн çапӑçма тытӑннӑ. Артиллери питӗ вӑйлӑ персе тӑнӑ хыççӑн совет танкӗсемпе пехоти вирлӗн пырса çапнӑ та çав хулапа пӗрлешсе ларнӑ Нойштадт ялне туртса илнӗ, вара хула тулашне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хула урамӗсенче хаяр çапӑçусем пуçланса кайнӑ. Нимӗçсем пур чул çуртсенчен те дотсем туса хунӑ, урамсенче минӑсем лартса хунӑ, баррикадӑсем туса хунӑ, танксене чармалли канавсем чавса тунӑ. Пирӗн артиллеристсем тӑшманӑн хирӗç тӑмалли узелӗсене пере-пере ишӗлтернӗ, пехотӑна çул уçа-уçа панӑ. Хула урамӗсенче тӑшман контратакӑсем темӗн чухлӗ вилли выртса юлнӑ. Нимӗçсем ирӗксӗрех квартал хыççӑн квартал хӑварса каялла чакнӑ.

Совет чаçӗсем гитлеровецсене чугун çул станцийӗн, çар завочӗсен районӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ, 150 хир туппи тата пысӑк боеприпас склачӗсем тытса илнӗ. Паян пирӗн çарсем тӑшманӑн йышлӑ гарнизонне аркатса тӑкнӑ та Кистжинь хулипе крепоçне пӗтӗмӗшпех туртса илнӗ. Гитлеровецсене тыткӑна нумай илнӗ.

Пирӗн авиаци çӗр çинчи çарсене тӑшманпа çапӑçма вӑйлӑн пулӑшса тӑнӑ. Совет летчикӗсем сывлӑшри çапӑçусенче тӑшманӑн 32 самолетне персе ӳкернӗ. Унсӑр пуçне, нимӗçсен 8 самолетне пирӗн зенитнӑй артиллери пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кольберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн подразделенисем унти вӑрмана шӑртласа тухнӑ чухне гитлеровецсен ушкӑнне тӗл пулнӑ. Çак нимӗçсем хирӗç тӑма пӑхнӑ. Çапӑçура нимӗçсен 27 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 12 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. Вилнисем хушшинче нимӗçсен 163-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗн Рубель генерал-лейтенантӑн ӳтне тупнӑ.

* * *

Венгрире, Балатон кӳллинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата хӗвелтухӑçнерехре, тӑшман ирхине ирех, артиллери вӑйлӑн персе тӑнӑ хыççӑн, пирӗн позицисене атакӑлама тытӑннӑ. Иртнӗ кунсенче нимле çитӗнӳ те тӑвайманнипе нимӗçсем хальхи çапӑçӑва тата икӗ танковӑй дивизи кӗртсе янӑ. Тыткӑна лекнисем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, кунти наступлени умӗн Гитлер приказ кӑларнӑ. Приказра çапла каланӑ: темле пысӑк çухатусем тӳсмелле пулсан та, мартӑн 10-мӗшӗ тӗлне Дунай шывӗ çине тухмалла, тенӗ. Нимӗçсем ӗнтӗ темиçе çӗр танк çухатрӗç, анчах та нимӗнле çитӗнӳ те тӑваймарӗç. Совет пехотинецӗсем, артиллеристсемпе танкистсем хӑйсен позицийӗсене паттӑррӑн хӳтӗлеççӗ, тӑшмана питӗ пысӑк çухату кӳреççӗ. Кун каçиччен пулса иртнӗ çапӑçусенче 3.000 нимӗç салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

Пирӗн авиаци тӑшманӑн çапӑçакан çарӗсене тата васкаса пыракан резервӗсене йышлӑн вӗçсе пырса штурмланӑ. Нимӗçсен танкӗсене, хӑй тӗллӗн çӳрекен тупписене, бронетранспортерӗсене тата автомашинисене нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тӑшманӑн 25 самолетне персе ӳкернӗ.

ИСКУССТВО МАСТЕРӖСЕН А. Н. ТОЛСТОЙ ЯЧӖПЕ ПУЛСА ИРТНӖ ВЕЧЕРӖ

Мускавра, Пӗтӗм Российӑри театр обществин Актер çуртӗнче, мартӑн 10-мӗшӗнче столицӑри искусство мастерӗсен А. Н. Толстой ячӗпе вечер пулса иртнӗ. Общество совечӗн председателӗ халӑх артистки А. Яблочкина хӑйӗн малтанхи сӑмахӗнче А. Н. Толстой писателе тӑван çӗршывӑн çулӑмлӑ патриочӗ тесе хакланӑ. А. Н. Толстой асӑнса, Игнатьев генерал-лейтенант тата Шостакович композитор сӑмахсем тухса каланӑ. Пианистка Юдина профессор тата Л. Коган скрипач Толстой юратакан произведенисене выляса панӑ. Республикӑн халӑх артисчӗ Орлов «Петр 1» романӑн сыпӑкӗсене вуласа панӑ. (ТАСС).

ФРОНТОВИКСЕН АЧИСЕМ ВАЛЛИ УÇНӐ ÇУРТСЕМ

Марый облаçӗнчи (Туркмени) колхозсем фронтовиксен ачисем валли ача çурчӗсем уçнӑ, ачасене пӑхса ӳстерес тӑкаксене пӗтӗмпех хӑйсем çине илеççӗ. Кӑçалхи февральпе март уйӑхӗсенче 24 ача çурчӗ уçнӑ. Колхозницӑсем ачасем валли кӗпе-йӗм çӗлеççӗ, колхоз правленийӗсем чи лайӑх продуктсем уйӑрса параççӗ. (ТАСС).

Çуракине большевикла хатӗрленер!

Партипе правительство постановленине вӗренеççӗ

СЕНТЕР. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницӑсем СССР Совнаркомӗпе ВПК(б) Центральный Комитечӗ «Ялхуçалӑхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышӑннӑ постановление вӗренеççӗ.

«Майӑн 1-мӗшӗ» колхозра (председателӗ Ямайкин юлташ) çак постановление сӳтсе явнӑ хыççӑн çуракине хатӗрленес ӗç мӗнле пынине тепӗр хут тӗрӗслесе тухнӑ. Тӗрӗслӳ колхоз çуракине лайӑх хатӗрленнине кӑтартнӑ. Колхоз хире 5.500 лав тислӗк кӑларнӑ, 22 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, кӗл тата ытти удобренисем те нумай пухнӑ. Плугсене, сеялкӑсене, урапасене, ут таврашӗсене юсанӑ, вӗсем ытлашшипех çитеççӗ. 16 сӳре çӗнӗрен тунӑ. Вӑрлӑхлӑх тырӑсем таса тата çителӗклӗ.

Г. МОИСЕЕВ.

Çураки валли вӑрлӑх çителӗклӗ хатӗрленӗ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Каншел ял Советне кӗрекен колхозсенчен çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе «Красноармеец» колхоз малта пырать. Çак колхоз иртнӗ ялхуçалӑх çулне те ӑнӑçлӑ вӗçлерӗ. Колхозӑн вӑрлӑхсем çителӗклӗ. Вӗсене сортласа тасатма уйрӑм звено тунӑ. Звено членӗсем М. Ильичева, В. Павлова, А. Давыдова юлташсем тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Тасатнӑ тырӑсен пахалӑхне тӗрӗслеме районри лабораторие янӑ. Вӑрлӑхсем тасалӑх енчен те, шӑтаслӑх енчен те лайӑх.

Çак кунсенче «Красноармеец» колхозра СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн «Ялхуçалӑхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышӑннӑ постановленине сӳтсе яврӗç, çуракине лайӑхрах хатӗрлеме пулчӗç.

Вӑйлӑ тырпул туса илес шутпа колхоз хире тислӗк кӑларать. Кӗркунне тата хӗлле пурӗ 2.000 лав ытла тислӗк кӑларнӑ. Конюхсемпе фермӑра ӗçлекенсене мӗнпур тислӗке пухса пыма уйрӑм заданисем панӑ.

Колхоз ялхуçалӑх машинисене юсас тӗлӗшпе те малта пырать. 7 плуг, 15 сӳре, 2 сеялка юсаса хунӑ. Колхоз тимӗрçи 63 çулхи колхозник Н. Ильичев ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлет. Колхозниксемпе колхозницӑсем, агротехникӑна вӗренеççӗ. Кашни бригадӑрах агрокружок ӗçлет.

В. ДАВЫДОВ,
Каншел ял Совечӗн председателӗ.

Вӑрлӑхсемшӗн сахал тӑрӑшаççӗ

ХЕРЛЕ ЧУТАИ. Районри колхозсем çураки валли паха вӑрлӑхсем хатӗрлес тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçлеççӗ. Çакӑнпа районри çӗрӗç работникӗсем килӗшсе лараççӗ. 63 колхозран 11 колхозра халӗ те вӑрлӑхсене сортласа пӗтерсе, районри лабораторие анализ тума паман. Ку ӗçре юлса пыракан колхозсене районри çӗрӗç пайӗпе МТС тивӗçлӗ пулӑшу памаççӗ.

Çӗрӗç пайӗнче ултӑ агроном шутланать. Анчах çӗрӗç пайӗн заведующийӗ В. Шипколин юлташ агрономсене ӗçе тӗрӗс вырнаçтарса тухман. Участоксенчи агрономсен ӗçӗсене контроллесе тӑрассине вӑл хӑйӗн ӗçӗ вырӑнне хумасть. Хурашаш участокӗнчи А. Козлова агроном колхозсенче сайра-хутра кӑна пулать. Колхозсене пырсан та, вӑл правлени канцелярийӗсенче çеç ларса вӑхӑта ирттерет; çуракине хатӗрленес ӗçре пулӑшу парасси çинчен унӑн шухӑшӗ те çук. Çавна пула унӑн участокӗнчи колхозсем çуракине сӳрӗк хатӗрленеççӗ. «Память Ленина» колхоз халӗ те вӑрлӑхсене сортласа пӗтермен, кунта ялхуçалӑх машинисене, удобренисене пачах хатӗрлемеççӗ. Çавӑн пекех «Правда», Киров ячӗпе тӑракан, «Чӑваш Коммуни» колхозсем те вӑрлӑхсене сортласа пӗтермен-ха.

Колхоз руководителӗсем те вӑрлӑхсем хатӗрлес ӗçе тивӗçлипе хакламаççӗ-ха. «Новый путь» колхоз председателӗ Лысов юлташ анализ тумалли вӑрлӑхсене сортламасӑрах районри лабораторие панӑ. Вӑрлӑхсене тӗрӗслекен районри лабораторири 5 агронома, МТС-ри 3 агронома колхозсене çуракине хатӗрленес ӗçре пулӑшма çирӗплетнӗ. Анчах вӗсем те, райçӗрӗç пайӗн агрономӗсем пекех, хӑйсен ӗçне çиелтен тӑваççӗ.

МТС директорне Г. Михеев юлташа унӑн агрономӗсем колхозсене çителӗксӗр пулӑшса пыни çинчен каласан, вӑл çапла ответлет:

— Агрономсем халӗ манӑн алӑра мар, вӗсене райçӗрӗç пайӗ ертсе пынипе ӗçлеме ятӗм,— тет. Михеев юлташ хӑйӗн агрономӗсен ӗçӗпе пачах интересленмест, вӗсем мӗнле ӗçленине контроллесе тумасть.

Çапла вара, районри çӗрӗç работникӗсем колхозсене паха вӑрлӑхсем хатӗрлеме пулӑшас ӗçрен аяккалла пӑрӑнса тӑнӑ. Колхозсен вӑрлӑхӗсем шӑтас пахалӑхӗ енӗпе кирлӗ кондицире тӑраççӗ пулин те, вӗсем питӗ таса мар. Вӑрлӑхсен тасалӑхӗ 50 процентран та каярах. Колхозсенче вӑрлӑхсене çумкурӑк вӑррисенчен тасатас тӗлӗшпе ӗçлемеççӗ, пӗрер хут сортланипех лӑпланса лараççӗ. Хӑшпӗр колхозсем сортласа та пӗтермен.

Вӑрлӑхсене пӗрремӗш хут сортласа, анализ тӑвас вӑхӑт иртсе ӗнтӗ. Çапах та районри çӗрӗç органӗсем юлса пыракан колхозсенче ку ӗçре васкатмаççӗ, вӑрлӑхсене иккӗмӗш хут анализ тума та хатӗрленмеççӗ. Чылай колхозсем вӑрлӑхсене çумкурӑк вӑррисенчен тасатма тытӑнман.

П. ТИХОНОВ.

Комсомолецсем çуракине хатӗрленес ӗçре

Шупашкар районӗнчи «Крахмал» колхозри комсомолецсем çитес çуракине тӑрӑшса хатӗрленеççӗ. Ку ӗçе вӗсем ялти çамрӑксене те активлӑн хутшӑнтараççӗ. Çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе уйрӑмах Иванов комсомолец лайӑх ӗçленине палӑртмалла. Вӑл 1944 çулхи çураки вӑхӑтӗнче пӗччен 32 гектар сухаланӑ, республикӑри çамрӑк сухаçӗсен ӑмӑртӑвӗнче малта тухнӑ, çавӑнпа ӑна 250 тенкӗ укçа парса премиленӗ.

Халӗ Леонид Иванов агротехника кружокӗнче вӗренет. Вӑл вырӑнти удобренисене пухса хатӗрлес тата хире кӑларас тӗлӗшпе ӗçлекен çамрӑксен бригадине ертсе пырать. Вӗсем 12 центнер кӗл, 4 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ, уя 800 лав ытла тислӗк кӑларнӑ.

Комсомолецсем пуçарнипе, çуракинче кирлӗ ут таврашӗсене, вӗрен-пӑявсене кирлӗ чухлӗ явса хатӗрленӗ, плугсемпе сӳресене пӗтӗмпех юсаса çитернӗ.

П. АРБАТОВ.

Колхозсемпе уйрӑм хуçалӑхсенче хурт-хӑмӑр ӗрчетесси çинчен

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ хурт-хӑмӑр ӗрчетесси çинчен постановлени йышӑннӑ. Çав постановленире колхозсенче хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗçе аталантарса ямалли тата колхозниксене, рабочисене, служащисене хурт-хӑмӑр тытма пулӑшмалли мерӑсене палӑртса хунӑ. 1945 çулта колхозсенче хурт-хӑмӑр çемьисен хисепне ӳстермелли плана çирӗплетнӗ.

Совнарком çапла тунӑ: 1945 çултан пуçласа, пухса илнӗ пылӑн 50 проценчӗ (хурт-хӑмӑрсене хӗлле тӑрантарма хӑваракан тата страховой фондсене уйӑрса хуракан пылтан пуçне) колхозниксене ӗçкунӗсем тӑрӑх памалла, пылӑн ытти пайне колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ кӑтартнӑ тӑрӑх расходламалла. Пылпа ӑвӑс сутса тупнӑ укçаран колхозсене хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗçе малалла лайӑхлатмашкӑн укçа уйӑрса хума сӗнеççӗ.

Кил çумӗнчи пахчасенче хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗçе чаçрах аталантарса ямашкӑн колхозниксене, рабочисене тата служащисене хурт-хӑмӑр сутмалла. Хурт-хӑмӑра чи малтан фронтовиксен çемьисене, Отечественнӑй вӑрçӑ инвалидӗсене тата пенсионерсене сутмалла. 1945 çултан пуçласа, хӑйсен килӗсем çумӗнче хурт-хӑмӑр ӗрчетекен колхозниксенчен, рабочисенчен, служащисенчен тата ытти граждансенчен илекен ялхуçалӑх налогӗпе подоходнӑй налога çакӑн чухлӗ чакараççӗ: кил çумӗнчи утарта 15 вӗлле таран пулсан, çав налогсене 50 процент чакараççӗ, 15-рен пуçласа 25 вӗлле таран пулсан 25 процент чакараççӗ.

Колхозсене хурт-хӑмӑр амисене памашкӑн Азербайджан, Узбек тата Молдаван ССР-ӗсенче, Краснодар крайӗнче, Пушкӑрт АССР-ӗнче питомниксем тата ӑратлӑ хурт-хӑмӑр ӗрчетекен вырӑнсем организацилеççӗ, нимӗç оккупацийӗнчен ирӗке кӑларнӑ облаçсемпе крайсенче тата республикӑсенче хурт-хӑмӑр хӑвартрах ӗрчетмелли питомниксем тӑваççӗ.

Пчеловодсем хатӗрлес ӗç çине те тимлӗн çаврӑнса пӑхмалла. 23 республикӑпа крайра тата облаçра кӑçал утарсен заведующийӗсене, бригадирсене тата инструкторсене вӗрентсе кӑларакан пӗр çул вӗренмелли шкулсем уçаççӗ. Çав шкулсем çумӗнче хурт-хӑмӑр ӗрчетме кӑмӑл тӑвакан рабочисемпе служащисем валли кӗске срокла курссем уçма шут тытнӑ.

Темиçе облаçпа крайри ялхуçалӑх техникумӗсенче хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗçе вӗрентекен отделени уçаççӗ. Вӗсем вӑтам квалификациллӗ специалистсене вӗрентсе кӑлармалла. Мускаври Тимирязев ячӗпе тӑракан ялхуçалӑх академийӗнче тата Киеври, Ташкентри, Новосибирскри ялхуçалӑх институчӗсенче хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗçӗн кафедрисем уçӑлаççӗ, хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗçӗн наукӑпа тӗпчев институтӗнче—зоотехник-пчеловодсен квалификацине хапартмалли институт уçӑлать. (ТАСС).

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене большевикла пурнăçлассишĕн

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ кăтартнă ситменлĕхсем комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕн ĕçĕнче те пур. Комсомол организацийĕсен çамрăксем хушшинчи политикăллă воспитани ĕçне илсе пăхсан, вĕсем уйрăмах хытă палăраççĕ. Пирĕн комсомол работникĕсенчен хăшпĕрисем политикăллă воспитани ĕçне хамăрăн куллеххи пурнăçран уйăрма пăхаççĕ. Кирек мĕнле плана та, кирек мĕнле производствăлла задание те политикăллă воспитани ĕçне тĕрĕс организацилесĕр пурнăçа кĕртме çукки çинчен вĕсем манса каяççĕ.

Политикăллă-воспитани ĕçĕн тĕп участокĕ вăл—марксизм-ленинизм теорийне большевиксен партийĕн историйне, СССР историйне вĕренесси, çавăн пекех тата хамăрăн государствăн пĕтĕм тĕнчери тата шалти пурнăçĕнчи пысăк событисемпе тăтăшах паллашса тăрасси пулать. Пирĕн çав ĕçе лайăх йĕркелеме кирлĕ условисем çителĕклĕ таранах пур. Литература та, кадрсем те. Вăл шутра çамрăксене политика вĕренĕвĕнче пысăк пулăшу пама пултаракан совет интеллигенцийĕн кадрĕсем те. Çаксем пурте çамрăксен ыйтăвĕсене тивĕçтерме яланах хатĕр. Анчах çав пуян условисемпе çителĕксĕр усă кураççĕ-ха. Комсомолецсем хăйсен политикăллă воспитани ĕçĕн пысăк опытне те яланах мар шута илеççĕ.

Теорие пĕлмесĕр, хăйсен пĕлӳне ӳстерсе пымасăр, комсомолецсем промышленноçпа ялхуçалăхĕнче те ăнăçлăн ĕçлеме тата малта выранта пулма пултараймаççĕ. Кăçалхи хĕл вăхăтĕнче комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе уйхире тислĕк нумай кăларнă. Анчах çав тислĕке пĕчĕк купасемпе салатса тăкнă. Çавна пула çурхи шыв тислĕкри паха ниçамсене юхтарса кайма пултарать. Комсомол организацийĕсем политикăллă воспитани ĕçне туса пынă чухне бригадăсенче выранти удобренисемпе тĕрĕс усă курас ыйтăва ăнлантарса панă пулсан, колхозниксем тислĕке пысăк купасене купаланă пулĕччĕç, çапла вара унăн пахалăхне сыхласа хăварма май пулнă пулĕччĕ. Уйрăмах эпĕ çавăн çинчен колхозсенче ĕçлекен комсомолецсене асăрхаттарасшăн. Ялхуçалăхĕнче вăхăт пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çураки вăхăтĕнче 2—3 кун кая юлсан, кайран вара темĕнле ĕçлесен те хуса çитме çук. Вара тырпул тухăçлăхĕ те чакать. Апла пулсан, комсомолецсен хăйсен агротехникăллă пĕлĕвне пĕрмаях ӳстерсе пымалла, хăйсем тĕллĕн нумай тата тимлĕн ĕçлемелле.

Районсенче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатса пырас ыйту политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас ыйтупа таччăн çыхăнса тăрать. Апла пулин те, комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем вулав çурчĕсен, клубсен, культура çурчĕсен ĕçĕпе çителĕксĕр интересленеççĕ. Мĕншĕн-ха, сăмахран, комсомолăн Кувакино райкомĕ районра вулав çурчĕсен хисепĕ чакнипе килĕшсе тăрать? Мĕншĕн-ха Кӳкеçре культура çурчĕ япăхса кайнă пулин те комсомол райкомĕ çавăн çине килĕшӳллĕн пăхать? Культура çуртĕнче комсомолецсем пе çамрăксем хăйсен пушă вăхăтне савăнăçлăн ирттерме тивĕçлĕ. Анчах та халĕ вĕсем унта урăх нисты та кайма çук пирки кăна сайра хутра кĕрсе тухаççĕ. Канашра клуб çук. Анчах комсомолăн хула комитечĕ çав ыйтупа сахал интересленет.

Комсомолăн республикăри активĕ пухăвĕнче каланă сăмахран.

И. ЧЕРЫКОВ
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ

Шупашкар хулинче шыв станцийĕ çук Шупашкарти пысăк предприятисенчен пĕринче клуб çук. Çапах та комсомолăн хула комитечĕ çав кирлĕ ыйтусем çине çаврăнса та пăхмасть. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ культурăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пыма хушать. Çакна пурнăçлама пирĕн районсенче те, хуласенче те кирлĕ условисем çителĕклĕ таранах пур. Комсомол организацийĕсем активлăн хутшăнса ĕçленипе. Пирĕн Атăл çинче тата ытти шывсем çинче шыва кĕмелли станцисем тумалла культура çурчĕсемпе клубсенче художествăллă пултарулăх ĕçне анлăн сарса пымалла. Халăх хушшинче пур тĕрлĕ спорт ĕçне те лайăхрах тата анлăн сарса пырас пулать, халăх праçникне—акатуя уявласине çĕнĕрен пуçарса ямалла. Мĕншĕн тесен унта спортăн пур йышши вăййисем те пулаççĕ. Комсомол организацийĕсен физкультурăпа спорт ĕçне пĕрмаях вăйлатса пырса, пирĕн çамрăксене Хĕрлĕ Çар ретне кайма хатĕрлессине лайăхлатас пулать. Çакна пурнăçа кĕртес тесен, комсомол органĕсене ертсе пыракан работниксен чи малтан хăйсен спорт ĕçне хутшăнас пулать. Çапла вара пĕтĕм комсомолецсемпе çамрăксене хăйсем хыççăн илсе каймалла. Шупашкар хулинче каток пур, анчах унта никам та ярăнмасть. Пирĕн Чăваш республикипе юнашар Горький облаçĕнче конькипе ярăнас ĕç питех те хытă сарăлнă. Чăваш республикинче вара çав ĕçе япăхтарса янă. Çакна вара йĕркеллĕ тесе шутлама пулать-и? Чăваш республикинче те физкультурăпа спорт ĕçне пур майсемпе те вăйлатса пыни кирлĕ. Республика 2 çул тултарнине çак тĕлĕшпе пысăк ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илмелле. Культурăллă-массăллă ĕçе пĕлсе организацилесе пырса çамрăксен ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтермелле тăвас пулать. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăнни постановление кăтартуллăн пурнăçа кĕртмелле.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕнче комсомол организацийĕсен ремесленнăй тата чугун çул училищисемпе ФЗО шкулĕсенчи çамрăксем хушшинчи ĕçĕ çинчен тĕплĕн сӳтсе-явнă. Пленум палăртнă ситменлĕхсем пире те пĕтĕмпех тивеççĕ, вăл ситменлĕхсемшĕн училищĕсемпе ФЗО шкулĕсем пур комсомол райкомĕсемпе хула комитечĕсем кăна мар, комсомолăн пĕтĕм облаçри организацийĕ ответлă пулса тăрать. Комсомолăн хăшпĕр районсенчи организацийĕсем училищĕсемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренме çамрăксене явăçтарас ĕçе питех те сахал хутшăнаççĕ, государствăн ĕç резервĕсене хатĕрлемелли условисем тата çав ĕçĕн пĕлтерĕшĕ çинчен çамрăксене сахал ăнлантарса параççĕ. Училищĕсемпе шкулсенчи вĕренӳ ĕçĕнче те чылай пысăк ситменлĕхсем пур. Вĕсем вара дисциплинăна пăсасси патне илсе пыраççĕ. Комсомол организацийĕсен, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса асăннă мĕнпур ситменлĕхсене пĕтермелле.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ комсомолăн ялти организацийĕсене ялхуçалăх ĕçĕсен государство планĕсене ăнăçлăн тултарассишĕн, тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх хисепне нумайлатассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва çамрăксене анлăн явăçтарма хушса хăварчĕ. Çак ĕçсене пурнăçлассишĕн комсомол организацийĕсен халех кĕрешме тытăнмалла, мĕншĕн тесен çураки—ялхуçалăх çулĕн ответлă тапхăрĕ—çывхарса килет.

Вăхăта вăраха ямасăрах, республикăри колхозсем валли мĕнпур культурăсен вăрлăхĕсене çителĕклĕ тупса хатĕрлемелле, ситмен вăрлăхсене улăштарса илессине организацилемелле. Пирĕн республикăра пĕтĕмĕшпе илсен вăрлăхсем çитессĕ ытлашши те пур. Анчах Кувакино Шăмăршă, Пăрачкав, Чкаловски районсенчи колхозсен пурин те вăрлăхсем çитмеççĕ-ха. Комсомол организацийĕсен вăрлăх фончĕсене хывас ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла, вăрлăхсем улăштарас ĕçе чăрмантаракансене хирĕç кĕрешсе пымалла.

Тепĕр кирлĕ ыйту вăл—туртăм вăйне сыхласа усрасси тата хатĕрлесси пулать. Халĕ лашасем çине тирпейсĕр пăхни çинчен калакан фактсем чылай тĕл пулаççĕ. Апла пулин те комсомол организацийĕсем çав фактсем çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ, лашасене лайăх пăхса усрассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Пирĕн колхозсенче конюхсем, ездовойсем пулса ĕçлекен комсомолецсемпе комсомолкăсем сахал мар. Çав комсомолецсен лашисем яланах чи лайăх лашасем пулмалла, вăл лашасем ытти конюхсемшĕн пример пулса тăччăр. Вăхăта вăраха ямасăрах, майралла шултăра выльăхсене кӳлсе сӳреме вĕрентме тытăнас пулать, иртнĕ çулхи опыта сармалла. Акă, сăмахран Вăрмар районне илер. Унта иртнĕ çулта тырпулсене пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтра майракаллă шултăра выльăхсем 700 пуç ытла ĕçленĕ. Кашни комсомолецăн хăйĕн ĕнине кӳлсе сӳреме вĕрентмелле. Уйрăмăнах çак ĕçе Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски тата ытти хăшпĕр районсенчи комсомолецсен тимлĕн пурнăçламалла. Мĕншĕн тесен асăннă районсенче кăçал та туртăм вăйĕ çитмест.

Пирĕн комсомол организацийĕсем сухаçăсем, акакансем тата ытти нумай тĕрлĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе паха мероприятисем палăртнă. Анчах вăл кадрсене хатĕрлесси халĕ питех те япăх пырать. Халĕ комсомол райкомĕсен колхозсем валли кадрсем хатĕрлес ĕçе вăйлатма мĕнпур тăтăклă мерăсене йышăнмалла. Çак ĕçе пурнăçлама вăхăт пур. Вăл вăхăтпа туллин усă курас пулать.

Комсомол организацийĕсем политикăллă воспитани ĕçне туса пынă чухне вăл ĕçĕн результачĕсем комсомолецсемпе çамрăксем фронта пулăшас тĕлĕшпе тунă ĕçсенче тĕрĕсленни çинчен асра тытас пулать.

Пирĕн малта пыракан колхозсем тата социализмлă çĕрĕçĕн паллă мастерĕсем хăйсен умне кăçал тухăçлă тырпул туса илес задача лартнă. Комсомолăн ялти организацийĕсен мĕнпур ĕçне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен йышăннă постановленире лартнă задачăсене ăнăçлăн тултарас май организацилесе пымалла. Республикăри комсомолецсемпе çамрăксен мĕнпур вăйне пĕлӳлĕхĕпе ăсталăхне пĕр çĕре—1945 çулта çĕнтерӳ тырпулĕ туса илес, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшас, ирсĕр тăшмана тĕппипех çĕнтермелли куна çывхартас задачăна пурнăçа кĕртнĕ çĕре памалла.

1944—45 ÇУЛХИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне)

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕçе	Хатĕрлес енĕçе	Мĕнле вырăн йышăнать: Турттарас енĕçе	Хатĕрлес енĕçе
Чурачăк	106.4	111.2	1	13
Шупашкар	106.3	138.6	2	5
Первомайски	104.2	134.9	3	7
Куславкка	103.9	115.9	4	10
Яскаловски	103.9	76.6	5	27
Шăхасан	103.6	134.5	6	8
Елчĕк	97.3	111.6	7	12
Советски	97.3	107.7	8	15
Комсомольски	93.7	104.4	9	16
Тăвай	92.5	96.7	10	20
Муркаш	92.5	95.4	11	21
Красноармейски	92.0	102.4	12	18
Пăрачкав	84.6	113.1	13	11
Сĕнтĕр	84.0	72.8	14	28
Çĕмĕрле	81.8	191.5	15	1
Сĕнтĕрвăрри	78.5	125.2	16	9
Вăрнар	76.7	141.7	17	4
Çĕрпӳ	74.5	94.0	18	22
Канаш	70.9	92.5	19	24
Вăрмар	67.1	72.3	20	29
Калинино	66.5	143.6	21	3
Ишлей	64.1	133.6	22	6
Шăмăршă	63.0	178.2	23	2
Элĕк	62.9	102.6	24	17
Октябрьски	56.9	84.6	25	26
Пĕпреç	56.5	92.7	26	23
Етĕрне	56.5	88.0	27	25
Хĕрлĕ Чутай	55.5	110.0	28	14
Улатăр	45.0	67.0	29	30
Кувакино	44.7	97.3	30	19
Кире вăрман хуçалăхĕ	108,0	115.6	1	6
Пĕпреç вăрман хуçалăхĕ	107.9	139.3	2	2
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	103.6	184,1	3	1
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	98.3	122.6	4	5
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	91,0	132,4	5	3
Долгополянăри вăрман завочĕ	90,1	128,0	6	4
Алтышево вăрман-промхозĕ	90 0	80,2	7	18
Пĕпреç участокĕ	88,5	91,1	8	10
Буинск вăрман-промхозĕ	78,8	102,5	9	8
Вăрнар вăрман-промхозĕ	75,6	102,9	10	7
Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пунктĕ	72,3	87,1	11	14
Канаш вăрман-промхозĕ	71,4	63,8	12	19
Пĕпреç вăрман-промхозĕ	69,8	87,2	13	13
Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ	66.7	92,2	14	9
Атăл леш енчи вăрманпромхоз	56.4	85,0	15	15
Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ	65.5	87,7	16	12
Улатăр вăрман-промхозĕ	58.4	84,1	17	16
Алтышевăри вăрман завочĕ	48,1	81,0	18	17
Шăмăршă вăрман-промхозĕ	45.7	89.4	19	11

Облигаци вылявĕсене тĕрĕслеççĕ

Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешри вулав çуртĕнче колхозниксемпе колхозницăсен заем облигацийĕсене тĕрĕслес ĕçе организациленĕ. Малтанхи кунах 822 тенкĕ выляв укçи тухнине тупнă. Е. Емельянов колхозникăн 165 тенкĕ, Е. Кошкинăн 100 тенкĕ тата ытти колхозниксен облигацийĕсемпе те нумай выляв тухнă.

ЮРĂ КĔНЕКИСЕМ

Чăвашгосиздат колхозсенчи тата предприятисенчи хор кружокĕсем валли икĕ юрă кĕнеки кăларать. Пĕр кĕнекинче — вырăс халăх юррисем, тепринче—хальхи боевой юрăсем. Иккĕшĕ те «Совет Союзĕн Гимнĕпе» пуçланаççĕ. Кашнин тиражĕ — 25.000 экземпляр пулать.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем тăшманăн Рейн шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи Везель патĕнчи укрепленине пĕтерсе тăкнă. Союзниксем Ремаген патĕнчи хăйсен укрепленине 9 миля сарнă шалалла 3 миля аслăлатнă. Вăл районта союзниксем 5 хула тытса илнĕ. вĕсем хушшинче Линц хули.

Унтан кăнтăртарахра Рейн хĕрринчи 8 миля тăршшĕ участока тăшмантан тасатнă. Союзниксен çарĕсем Кобленцран пĕр миля çурçĕртерехре тăраççĕ. Мозель шывĕн çурçĕр çыранне тасатнă вăхăтра Кобленцпа Кохем хулисем хушшинче темиçе хулапа ял тытса илнĕ.

Пĕлтерӳре каланă тăрăх, союзниксем мартăн 11-мĕшĕнче 30 хулапа ял ытла йышăннă. Мартăн 10-мĕшĕнче 4.719 нимĕçе тыткăна илнĕ.

БЕРЛИН, ЭССЕН, БРЕМЕН, ГАМБУРГ ТАТА КИЛЬ ХУЛИСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин «Москито» йышши самолечĕсем Берлина татах тапаннă. Хула çине 2 тоннăна яхăн таякан бомбăсем нумай пăрахнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла иртсен акăлчансен 1.000 бомбардировщикĕ ытла Эссена тапаннă. Самолетсем фугаслă бомбăсем пит нумай пăрахнă.

Американецсен авиацийĕн 8-мĕш корпусне кĕрекен 1.200 йывăр бомбардировщика яхăн, 750 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Бременри, Гамбургри тата Кильри подводнăй лодкăсен верфĕсене тапаннă.

РУМЫНИПЕ СОВЕТ ПРАВИТЕЛЬСТВИСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕМ ПĔР-ПĔРИН ПАТНЕ ÇЫРУСЕМ ЯНИ ÇИНЧЕН РУМЫНИРЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян пур хаçатсем те Çурçĕр Трансильванире Румыни администрацине туса хунă пирки умстатьясем пичетленĕ. Нумай хаçатсенче çакăн пирки Сталин юлташăн, Петре Грозăн тата Румыни королĕн портречĕсене пичетленĕ. «Скынтейя» хаçат умстатьяра çапла çырать: «çĕршыв пуçĕнче фашистсем майлă ĕçлекен правительство вырăнне демократиллĕ правительство тăнă пулсан, çак ырă ĕç тахçанах пулнă пулĕччĕ», тет.

Статья авторĕ çапла çырать: «Румыни халăхĕ совет халăхĕнчен илнĕ пулăшăва нихçан та манас çук. Ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара тата унăн Верховный Главнокомандующине генилллĕ Сталина хамăр тăван çĕршыва ирĕке кăларнăшăн тата Çурçĕр Трансильвание Румыни çумне пĕрлештернĕшĕн Румыни халăхĕ яланах тав тăвĕ».

«Журналул де Диминяфа» хаçат çапла çырать: Совет правительстви Çурçĕр Трансильванире Румыни администрацине туса хума шут тытни çав территори Румыни территорийĕ пулнине йышăннинчен, Совет Союзĕ Гроза правительствине шанса тăнинчен тата Совет Союзĕпе Румыни çарĕсен тылĕнче лăпкăлăхпа йĕркелĕх туса хурас тĕлĕшпе Румыни çине ӳкекен обязанноçсенчен килет.

«Скынтейя» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, столицăри предприятисемпе учрежденисенче пуринче те пухусем пулса иртнĕ. Вăл пухусенче фабрикăсемпе заводсенчи тата учрежденисенчи рабочисемпе служащисем Совет правительствин решенине тата Румынири демократиллĕ çĕнĕ правительствăн пирвайхи пысăк çитĕнĕвне хĕрӳллĕн саламланă.

Нациллĕ-демократиллĕ фронтăн хаçачĕсем, çавăн пекех тата «Тимпул», «Журналул» хаçатсем Арлюс обществин членĕсен—интелигентсен Сталин патне янă телеграммине пичетлесе кăларнă. Вăл телеграммăра çав çынсем Çурçĕр Трансильванире Румыни администрацине туса хунăшăн тав тăваççĕ.

«Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер премьер-министр Гроза патне Трансильвани çыннисен делегацийĕ пынă. Çурçĕр Трансильвание Румынипе пĕрлештернĕшĕн вăл делегаци Петре Гроза ертсе пыракан правительствăна тав тунă.

ТРАНСИЛЬВАНИРЕ РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН АДМИНИСТРАЦИНЕ ТУСА ХУНĂ ПИРКИ

БУХАРЕСТ, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Нациллĕ-демократиллĕ фронт совечĕ Çурçĕр Трансильванири нациллĕ-демократиллĕ фронт советĕнчен телеграмма илнĕ. Ăна ĕнерхи хаçатсенче пуринче те пичетлесе кăларнă. Вăл телеграммăра çапла каланă: «Совет Союзĕн аслă çулпуçĕ Сталин Маршал янă телеграммăпа Грозăн декларацине пула Çурçĕр Трансильванири нациллĕ-демократиллĕ фронт совечĕ Çурçĕр Трансильвание Румыни государствине тепĕр хут таварса панине калама çук хытă савăнса саламлать. Çĕршыва демократизацилес тата демократиллĕ ирĕклĕхсене хисеплеттерес ĕçе правительство вĕçнех çитерĕ, тесе шанса тăратпăр. Сывă пултăр Сталин Маршал! Сывă пултăр Гроза правительстви! Сывă пултăр ирĕклĕ, демократиллĕ тата никама пăхăнман Румыни çумне пĕрлештернĕ демократиллĕ Трансильвани!»

Телеграмма çине çаксем алă пуснă: Совет председателĕ Теофил Вешкан доктор, Совет членĕсем: Иордаке, молдаван доктор Иштван Рококош.

РИМРА ВĂРТТĂН ĔÇЛЕКЕН ФАШИСТЛА ОРГАНИЗАЦИ ТУПНĂ

РИМ, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Римра вăрттăн ĕçлекен «фашистла республиканецсен партийĕ» ятлă организацин 35 членне тытса хупнă. Тытса хуписем хушшинче салатса янă фашистла милицин 4 офицерĕ пур. Кавалашакансен çурчĕсенче хĕçпăшал тупнă. Вăрттăн ĕçлекен организацире 20.000 члена яхăн тăнă.

ИТАЛИРИ ПĔТĔМĔШЛЕ ĔÇ КОНФЕДЕРАЦИЙĔН РЕЗОЛЮЦИЙĔ

РИМ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕн директорачĕ мартăн 8-мĕшĕнче ырланă резолюцире çапла каланă:

«Италири пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕ çакăн çинчен чаплăн пĕлтерет: Итали халăхĕн ирĕклĕхне хирĕç тата правосудие ĕçне хăвăрт вĕçлесе çитерессине хирĕç кĕрешме хăтланакансемпе вăл пур майсемпе те кĕрешме пулать», тенĕ.

Çĕршывра пулса иртекен пăлханусем тенĕ резолюцире, тасату ĕçне тивĕçлипе туса ирттерменнинчен, нацин халăхи йывăр пурнăçĕшĕн ответлă çынсене наказани паманнинчен килет. Резолюцире малалла çапла каланă: ирĕклĕхе тата демократие пуласлăхне хăратса тăракан çакăн пек лару-тăрăва рабочи класс тӳсме пултараймасть, тенĕ.

ПОЛЬШĂН ХĔВЕЛАНĂÇ РАЙОНĔСЕНЧЕ ÇĔР РЕФОРМИ ТУСА ИРТТЕРЕÇÇĔ

ВАРШАВА, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Польша республикин нумай уезĕсенче Висла шывĕн сулахай енче, çĕр реформи çинчен калакан закона пурнăçа кĕртме тытăннă. Халăх, çав тери хавасланса, фашистсен хӳрешкин Дубошиньскин çĕрне валеçме тытăннă. Çав помещик çуртĕнче хресченсем шкул уçма йышăннă. «Работник» хаçат çĕр реформи пирки çырнă статьяра çапла калать: хуласемпе промышленность центрĕсене апат-çимĕçпе чĕрнава парса тăрас тĕлĕшпе поляк хресченĕсем çине пысăк ответлăх ӳкет. вăл задачăна поляк хресченĕсем чыслăн пурнăçа кĕртĕç тет.

ТĂВАН ÇĔРШЫВА ТАВĂРĂНАС ТЕКЕН ОФИЦЕРСЕНЕ ПОЛЬШĂН ЭМИГРАЦИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ХĔСĔРЛЕНĔ

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра çакă паллă пулнă: Польшăн эмиграцири правительстви Польша çарĕсен çĕнĕ главнокомандующийĕ вырăнне Андерс генерала лартнă. Çак генерал Польшăна таврăнса Польшăн Вăхăтлăх Правительствин çĕнĕрен туса хунă çарне кĕрес текен поляк офицерĕсене нумайĕшне вырăнтан кăларнă.

ЧЕХОСЛОВАКИ ПРЕЗИДЕНЧĔ ЛОНДОНРАН ТУХСА КАЙНĂ

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки президенчĕ Бенеш мартăн 11-мĕшĕнче Англирен хăйĕн тăван çĕршывне кайнă. Чехословакие вăл апрель пуçламăшĕнче пырса çитмелле. Икĕ эрне хушши Бенеш Мускавра пурăнмалла. Бенешпа пĕрле ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Масарик тухса кайнă.

ПЬЕР СЕМАРА ПЫТАРНИ

ПАРИЖ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Парижра железнодорожниксен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ пулса ĕçленĕ Пьер Семарăн ӳтне чаплăн пытарнă. Ăна 1942 çулхи март уйăхĕнче Эвр хулинче нимĕçсем персе пăрахнă. Семара пытарма авиаци министрĕ Тийон тата коммунистсен партийĕн пысăк делегацийĕ пынă, çав шутра—Морис Торез Дюкло Марти Марсель Кашен, Жорж Коньо Гастон Моннуссо. Пытарнă çĕрте тата тăшмана хирĕç кĕрешекен тĕп организацисен, Пĕтĕмĕшле Ĕç Конфедерацийĕн тата Париж районĕнчи профсоюзсен представителĕсем пынă.

МАННЕРГЕЙМ ХĂЙĔН ĔÇĔСЕНЕ ТУМА ТЫТĂННĂ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндин телеграф бюровĕ çапла пĕлтернĕ: мартăн 10-мĕшĕнче Финлянди президенчĕ хăйĕн полномочийĕпе обязанноçĕсене каллех хăй çине илнĕ.

ЭАМ ПРЕДСТАВИТЕЛĔ РЕГЕНТ ПАТĔНЧЕ ПУЛНИ

АФИНЫ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). ЭАМ представителĕсем Греци регенчĕ патĕнче пулнă. Вĕсем Греци правительствипе ЭАМ тунă килĕшĕве пăснине хирĕç протестленĕ, çавăн пекех тата, Крымри декларацие шута илсе, Грецири пур тĕп партисен представителĕсенчен çĕнĕ правительство туса хума ыйтнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç паиĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Лусон утравĕ çинче Америка çарĕсем японецсен Манила хулинчен хĕвелтухăçнерехри оборона линине татнă.

ВАШИНГТОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен бомбардировка авиацийĕн 20-мĕш соединенийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 10-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран вăйлă бомбардировщикĕсем Токио хулинчи промышленность объекчĕсене тапаннă. Хула çине 1.000 тонна ытла бомба пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем Филиппин утравĕсем хушшинчи Минданао утравĕн кăнтăр-хĕвеланăç вĕçне аннă. Японецсем вĕсене хирĕç вăйлăн çапăçаймаç.

ВАШИНГТОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран хăватлă 300 бомбардировщика яхăн 2.000 тонна таран фугаслă тата вут хыптаракан бомбăсем илсе Вăтам Японири Нагоя хулине тапаннă. Хула варринче 5 тăваткăл миля пысăкĕш лаптăк çинче пушарсем тухнă. «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран хăватлă самолетсем çавăн пекех Сингапурти Япони предприятийĕсене тапаннă.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Иван Васильевич Садчиков юлташа ССР Союзĕн Югославири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Колхозсен уйхирĕсене выранти удобренисем ытларах кăларар

Колхозлă ял умĕнче 1945 çулта татах та вăйлăрах тырпул туса илес задача тăрать. Агротехника мероприятийĕсене пĕр пăрмаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыни тата уйхире выранти удобренисем ытларах кăларни çав паха задачăна татса пама пулăшаççĕ. Халĕ, вăрçă пынă вăхăтра, тĕрлĕ сăлтавсене пула, минераллă удобренисемпе анлăн усă курма май çук. Çавăнпа та выранти удобренисемпе ытларах усă курмалла.

Выранти удобренисенчен тислĕк, торф, компост, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл ялхуçалăх культурисемшĕн питĕ паха та кирлĕ япаласем пулса тăраççĕ. Çав удобренисенче ӳсен-тăрансем валли пур тĕрлĕ апатсем те пур. Тăпрара тырпулсене кирлĕ япаласем ытларах пулччăр тесен, тырă тухăçлăхне ӳстерес тесен, уйхире тислĕкпе торф уйрăмах нумай тăкмалла.

Пирĕн республикăра торф выртакан вырăнсем питĕ нумай. Пĕтĕмпе вĕсем 13.650 гектар шутланаççĕ. Унта 181.740 пин кубометр торф пур. Çак запасран çурри ытла Улатăр, Пăрачкав тата Çĕмĕрле районĕсенче выртать. Уйрăм вырăнсенче торф 6—8 метр хулăнăш сийсемпе выртать. Торфăн çавăн пек пысăк пуянлăхĕпе пĕлсе те туллин усă курсан, тăпран пахалăхĕпе тырпул тухăçлăхне нумай ӳстерме пулать.

Республикăри малта пыракан колхозсем тислĕкпе тата торфпа анлăн усă кураççĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз тислĕкпе торфа уйхире нумай кăларать. Агротехника мероприятийĕсене лайăх пурнăçласа пынипе пĕрлех выранти удобренисемпе анлăн усă курни çак колхоза пысăк тухăçлă тырпул туса илме май пачĕ. 1944 çулта Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 21,6 центнер ыраш, 15,7 центнер кĕрхи тулă, 19,8 центнер çурхи тулă, 29,1 центнер урпа, 26,4 центнер сĕлĕ, 15,7 центнер пăрçа, 14,4 центнер вир пухса илнĕ. Çапла вара кашни гектартан 22,34-шер центнер тĕш тырă туса илнĕ. Çак районри Молотов ячĕпе тăракан колхозра та кашни çулах хире тислĕкпе торф йышлăн кăларнине пула, вăйлă тырпул туса илеççĕ.

Анчах, выранти удобренисем тырă тухăçлăхне ӳстерес ĕçре пысăк вырăн йышăннине пĕлсе тăнă çĕртех, уйрăм колхозсем тислĕкпе торфа кирлĕ пек хакламаççĕ. Уйрăмăнах колхозсенче торф кăларасси тата унпа усă курасси ытла та çителĕксĕр пулса пырать. Халĕ минераллă удобренисемпе усă курма май çук вăхăтра айĕнчи торфпа усă курманнине текех чăтса тăма çук. Колхоз председателĕсен торф хатĕрлесе хире кăлармалли плана тултарассишĕн кирлĕ пек кĕрешмелле. Хĕлле торфа хатĕрлесе уя турттарас ĕç çăмăлтарах. Халĕ колхозсенче çынсем те, туртăм вăйĕ те пур. Унсăр пуçне, çулла торф выртакан вырăна лашапа пырса кĕме те йывăр пулать. Çакна асра тытса, торф хатĕрлес тĕлĕшпе кашни колхозрах халех ĕçлемелле.

Торфăн пахалăхĕ ăна хатĕрлеме пĕлнинчен те нумай килет. Торфа кăларса хурсан ăна çил çинче кушăрхаттарса типĕтмелле. Чĕрĕ торфа тӳрех тăпра çине тăкма юрамасть, мĕншĕн тесен торфра сиенлĕ япаласем те пур. Торфа сил çинче тытсан çав япаласем сиенсĕрленеççĕ. Савăнпа та торфа кăларсанах, ăна купасемпе шаршансем туса хумалла. Купан е шаршанăн сарлакăшĕ 1,5—2 метр пулмалла, тăршшĕне хуть те мĕн чухлĕ те тума пулать. Çакăн пек купаре вара торф чылай уйăх хушши выртмалла. Çулла хатĕрленĕ торф кĕркуннеччен выртма пултарать, унчух вара унпа кĕрхи сĕртме тунă çĕрте усă курмалла. Хĕлле хатĕрленĕ торф çуркуннеччен выртать, вăл торфа сĕртме сухи айне тăкмалла. Çак вăхăт хушшинче торф типет, çилпе кушăрхать те лайăх удобрени пулса тăрать. Торф кушăрхаса çитсе тĕпренекен пулсан, ăна вара уйхире тăкма та юрать. Савăн пек торфа ыраш акмалли вырăна кашни гектар çине 30—60 тонна таран тăкас пулать. Торф тăкса çемсетмелли вырăн торф кăларакан вырăнтан якра пулмасан, торфа хĕлле хатĕрленĕ вăхăтрах ăна сине турттарса, пĕрер лав пысăккĕш купасем туса тăкма юрать. Сивĕ е усă сывлăш ăна кушăрхаттарать вара вăл сĕртме тунă вăхăт тĕлне лайăх удобрени пулса тăрать.

Тислĕк ытларах тăвас шутпа тата выльăх шĕвекĕсене нумайтарах пухса хăварас тесен, торфа выльăх айне сармалла. Вăл выльăх шĕвекне улĕмран ытларах сăхса илет, çапла вара ӳсен-тăраншăн питĕ те кирлĕ азота сыхласа хăварать. Вăл кăна мар, торфа выльăх айне сарсан, унăн пахалăхĕ те ӳсет.

Торфпа компост тунă çĕрте те усă курма пулать. Компост тума хирте, сӳлĕрех вырăн суйласа илмелле. Торфа 20—25 сантиметр хулăнăш сийпе хурасса пулать. Унăн сарлакăшĕ 1,5—2 метр пулмалла, тăршшĕ хуть темĕн чухлĕ те пулма пултарать, вăл компост тăвакан материал мĕн чухлĕ пурринчен килет. Çак торф сийĕ çине кĕл е фосфорит çăнăхĕ сапмалла. Ун хыççăн каллех тепĕр сий торф хумалла. Çапла вара компост купине 1,5 метр çӳллĕш купалама пулать. Компоста пулса ĕлкĕрме 2 уйăхран пуçласа 7 уйăха çити вăхăт кирлĕ. Компост пĕр пек пулса çитсен тата вăл тĕпренекен пулсан, ăна хире тăкма та юрать. Компост тума хывакан пĕр тонна торф çине 10—20 килограмм фосфорит çăнăхĕ, кĕл е известь кирлĕ. Торф компостне фекалипе тата тислĕк шĕвекĕпе тусан та лайăх. Компост тунă торфа пур тĕрлĕ тырпул айне те тăкма юрать, анчах сĕртме пуссине сухалана вăхăтра кашни гектар çине 20—40 тонна тăксан лайăхрах. Пахча-çимĕç лартмалли вырăна тăкас тесен кашни гектар çине 30—60 тоннăна çити тăкмалла. Анчах компост тăкмалли чи лайăх вăхăт—кĕрхунне кĕрхи сĕртме тунă чухнехи вăхăт пулса тăрать.

Уйхире выранти удобренисем ытларах кăларассишĕн кĕрешни—вăйлă тырпулшăн кĕрешни пулать. Çавăнпа та кашни лав тислĕкшĕн, кашни центнер кĕлшĕн, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕшĕн тата ытти удобренисемшĕн халĕ, хĕллехи вăхăтра çине тăрса кĕрешмелле.

Торфпа, тислĕкпе тата ытти удобренисемпе анлăн усă курни тырă тухăçлăхне ӳстерет. 1945-мĕш ялхуçалăх çулĕнче пур тĕрлĕ агротехника мероприятийĕсене те тĕрĕс пурнăçа кĕртсе выранти удобренисемпе ытларах усă курса, вăйлă тырпул туса илер, çĕршывпа паттăр Хĕрлĕ Çара ытлан-çитлен апат-çимĕç парса тăрар.

Т. КРУЖИЛИН
Ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редактăран — 0—07, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленноç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—31.

НТ 00542 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000